ХЫПАР

# ТЕТТЕ
## ИГРУШКА

+0

4
2014



Ксения КОШЕЛЕВА

**Пĕр хĕвел, анчах пурне те ăшăтать.**

**Солнце одно, но согревает всех.**

Николай ИШЕНТЕЙ



# Асамлă сăмах

Юмах

Куян вăрман çулĕпе йăкăл-якăл сиккелесе пынă. Çулĕ ай хитре: икĕ енĕпе чĕлтĕр-чĕлтĕр чечексем, чăн варринче – тунката. Кĕтмен çĕртен Кĕске хӳре унран такăннă та мăкăл-макăл чикеленнĕ.

– Фу, Тăрлавсăр Тунката, такăнтарса лариччен хăяккăн выртинччĕ, – тенĕ кӳренĕçлĕн ура çине тăрса.

Тунката хирĕç пĕр сăмах та шарламан.

Çулпа Чĕрĕп кăштăртатса пынă. Йĕплĕскер Тункатаран çакланнă. Ни каялла, ни малалла каяйман.



– Фу, Тăрлавсăр Тунката, чăрмантарса лариччен хăяккăн выртинччĕ, – ятлаçнă вăл. Тунката каллех сăмах чĕнмен.

Çул тăрăх Вăкăр пынă. Вăл та чармака мăйракипе çаклатнă.

– Фу, Тăрлавсăр Тунката, кармакланса лариччен хăяккăн выртинччĕ, – тенĕ те мăйракипе пĕррех тăрăслаттарнă. Тунката айккинелле йăваннă. Таврашĕнчи сарă-хĕрлĕ чечексем те лӳчĕркеннĕ.

Çав çулпах Çын утса пынă.

– Аван-и, тăвансем! – ырă суннă Çын пурне те.

– Ăçтан аван пултăр, Тăрлавсăр Тунката çулпа утса çӳреме чăрмантарать, – ӳпкелешнĕ чĕр чунсем.

– Тăвансем, кирлĕ кунра Тунката та кирлĕ пулĕ, – тавăрнă Çын. Хăяккăн выртаканскере вăш-ваш тăратса лартнă вăл. – Тенкел пекех, аванскер.

Çакна илтсен Тунката евĕклĕн калаçма пуçланă.

– Мана тенкелпе танлаштарнăшăн тавах, ырă Çын. Эсĕ мана, манăçа тухнăскере, хисепсĕрскене чыс турăн. Çулта-йĕрте ывăнтăн пуль, ларса кан ман çинче, – тараватлăн чĕннĕ Тунката.

Чĕр чунсем тĕлĕннипе çăвар карнă.

– Ырă Çын, кала-ха, мĕншĕн Тунката пире ларма чĕнмерĕ. Саншăн вара тараватлă, канса илме йыхăрать, – пĕр-пĕрне пӳлсех ыйтнă вĕсем.

Ĕшеннĕскер Тунката çине меллĕн вырнаçса ларнă та çапла ăнлантарнă.

– Эпĕ асамлă сăмах каларăм. Çавă Тунката кăмăлне çемçетрĕ, ырă еннелле çавăрчĕ, – унтан çапла хушса хунă. – Ай, меллĕ Тенкел! Халтан кайнисене те вăй кĕртекенни!

Чăн сăмахăн суйи çук. Сума сусан армак-чармак тунката та тараватлă тенкеле куçать. Салам сăмахĕнче асамлă вăй тапса тăрать пулас. Тата сывлăх суннинчен пурнăç илемĕ те килет иккен. Ахальтен мар çул хĕрринчи сарă-хĕрлĕ чечексем пуçĕсене çĕкленине вăрман чĕр чунĕсем те асăрхарĕç.

Александр ПЛЕХАНОВ

# ХАВАСЛÁ УРОК
## ВЕСЁЛЫЙ

**Кашни чӗр чуна тата вӗлле хуртне хӑйсен апатне тупма пулӑш.**

Помоги каждому животному и пчелке найти свое любимое блюдо.






**Примерсене шутла та упа ҫури мӗн пуҫтарма шут тытнине пӗл.**

Реши примеры и угадай, что хотел собрать медвежонок.

**Пуллӑн чӑн мӗлкине туп.**

Найди настоящую тень рыбы.



*Ксения КОШЕЛЕВА*

# Вăйă-кулă уçланки
# Игровая поляна

**Пакшана эскиза пăхса ÿкерсе пĕтер.**

**Дорисуй белку по указанным пунктам.**




*Ольга РАЙКОВА*



**Пушă вырăнсене кирлĕ чечексем ÿкер.**

**Нарисуй в пустые клетки соответствующие цветочки.**

*Ксения КОШЕЛЕВА*

**Ÿкерчĕке хатĕрленĕ чухне художник мĕнле йăнăшсем тунă-ши?**

**Найди ошибки художника.**

*Ольга РАЙКОВА*



# Вăйă-кулă уçланки
# Игровая поляна




**Пушă тăваткăлсене «+» е «-» паллăсем ларт.**

**Впиши в пустые клетки знаки «+» или «-».**



**Пăнчăсене пĕр-пĕринпе пĕрлештер те ӳкерчĕкре кам сăнланнине пĕл.**

**Соедини точки и узнай, что изображено на рисунке.**

*Ксения КОШЕЛЕВА*



**Йăвачана тусĕ патне кĕске çулпа çитме пулăш.**

**Помоги колобку дойти к другу коротким путем.**

*Мария АРЛАН*

# Паттăр Пĕçукка

Пирĕн килте ăслă тата çăмламас Пĕçукка кушак пур. Вăл мĕн каланине пĕтĕмпех ăнланать.

Пĕррехинче унпа çакăн пек путишле ĕç пулса иртрĕ. Вăл, çывăрма юратаканскер, кил умĕнчи пĕренесем çине тăсăлса выртнă та хĕвел ăшшинче тĕлĕрсе кайнă. Сисмен-кĕтмен çĕртен кӳршĕсен йытти ăна асăрханă та хăйĕн çинçе сассипе хамлатса вĕрме тытăннă. Хамлатать-хамлатать, анчах Пĕçукка вырăнтан та хускалма шухăшламасть. Çак сасса илтсенех вĕсем патне тата тепĕр йытă чупса çитет. Хайхисем иккĕн вĕрме пуçлаççĕ. Вĕсем мăр-мăра иккĕн хăрататпăр тенĕ пулас, анчах кăлăхах – кушак ыйхăллă куçĕсене мăраннăн уçса пăхнă та каллех тепĕр енне çаврăнса выртнă. Нумай-и, сахал-и – урам вĕçĕнчен пысăк та хулăн сасăллă, пăхма вăйлă та кĕрнеклĕ тепĕр йытă чупса çитет. Халĕ виççĕн тан вĕрме тытăнаççĕ. «Кусем паян мана йăлăхтарсах çитерчĕç», – тенĕ те кушак вĕсем çине мăнаçлăн кăна пăхса илнĕ. Çурăмне çӳлелле авса пысăкланчĕ те чĕрнисене кăларса карăнчĕ. Çăварне карса, çивĕч шăлĕсене кăтартса, çинçе те янăравлă сассипе çухăрнă. Йытăсем хăраса каялла чакнă. Пĕçукка ним пулман пекех васкамасăр хапха айĕпе кил хушшине ерипен кăна кĕрсе кайнă. Лешсем хамлатса тăрса çеç юлнă. «Хăратрăмăр, çĕнтертĕмĕр!» – тенĕ пулас.



Пĕçукка кил хушшинчи пĕренесем çине ним пулман пек тăсăлса выртнă та хĕвелпе малалла хĕртĕнсе каллех тутлă ыйха путнă.

***Автор ӳкерчĕкĕ.***

## Ваттисем çапла калаççĕ:

- Вĕçкĕне вĕçме нумай кирлĕ мар.
- Вĕçкĕнĕн пĕр пуслăх çĕрри те çĕр тенкĕлĕх йăлтăртатать.
- Каппайнипех капан тăрланмасть.
- Каппайса çӳрекен капкăн çине пуснă тет.

# ХАВАСЛĂ УРОК
## ВЕСЁЛЫЙ УРОК




Карниссенче кăтартнă числосене çитме кашни çуртра тата миçе çаврашка кирлĕ? Çавăн чухлĕ çаврашка ÿкер.

Сколько кругов не достает до указанного номера дома?

Лабиринтпа утса тух та слон камран хăранине пĕл.

Пройди по лабиринту и узнай, кого испугался слон.





Ÿкерчĕкри «+» паллă тунă вырăнсене хăмăр, «·» паллăна симĕс, «-» паллăна кăвак тĕссемпе сăрла.

Раскрась рисунок. Знаки «+» коричневым, «·» зеленым, «-» синим цветами.

*Ксения КОШЕЛЕВА*

**Килти чĕр чунсем**
**Домашние животные**
**Domestic animals**
**[доместик энимăлз]**

**Эпир ферма куратпăр**
**Мы видим ферму**
**We see a farm**
**[Вии сии э фаам]**



**Ферма пысăк**
**Ферма большая**
**The farm is big**
**[Зе фаам из биг]**

**Ĕне, вăкăр, сурăх, лаша, сысна – килти чĕр чунсем**
**Корова, бык, овца, лошадь, свинья – домашние животные**
**Domestic animals are, a cow, a bull, a sheep, a goat, a horse, a pig**
**[доместик энимăлз аа э кау, э бул, э шиип, э гоут, э хоос э пиг]**



**Йытă, кушак – килти чĕр чун-и? Ҫапла**
**Собака, кошки – домашние животные? Да**
**Is a dog, Is a cat a domestic animal? Yes, it is**
**[Из э дог э, из э кэт э доместик энимăл. Йес, ит из]**



**Ку фермер**
**Это фермер**
**This is a farmer**
**[Зис из э фаамă]**





**Ĕне – пăрăвăн амăшĕ**
**Корова – мама теленка**
**A cow is a mother of a calf**
**[Э кау из э мазăр ăв э кааф]**

**Сурăх – путекĕн амăшĕ**
**Овца – мама ягненка**
**A sheep is a mother of a lamb**
**[Э шиип из э мазăр ăв э лэм]**

*Александр* **ПЛЕХАНОВ**



**Лаша – тихан амăшĕ**
**Лошадь – мама жеребенка**
**A horse is a mother of a foal**
**[Э хоос из э мазăр ăв э фоул]**



Акăлчан чĕлхи урокне Галина ЗОТОВА (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Штанаш шкулĕ) ертсе пырать.

Урок английского языка ведет Галина ЗОТОВА (Красночетайский район, Штанашская школа).

Николай ТЕВЕТКЕЛ

## Пӑлан пӑрушӗ



Хальлӗхе пӑлан пӑрушӗ
Пӗчӗк-ха, айван.
Вӑрманта ӑна хӑрушӑ
Амӑш пулманран.
Илтӗнмест-ҫке чӑтлӑх витӗр
Амӑш панӑ сас.
Амӑшне кӗтсе вӑл питӗ
Тунсӑхлать пулас.

## Чӗпӗсем



Ватӑ чӑх кӑтиклетсе
Сар чӗпписене
Урама тухать ертсе
Янкӑр ирхине.
Сар ҫӑмха пек чӗпӗсем
Ҫӑварне карсах
Сиккелеҫҫӗ шимплетсе:
– Апат пар часрах!

## Юрӑҫ-шӑнкӑрч



Ҫурхи шывӗ шӑнкӑр-шӑнкӑр
Юхрӗ аслӑ урамра.
Ыр хӑнаҫӑм – юрӑҫ-шӑнкӑрч
Хӑвӑрт тытӑнчӗ юрра.

Сар хӗвел – ҫур илемӗ
Тыткӑнларӗ чӗреме.
Кам кӑна пӑхса киленмӗ
Ытарма ҫук илеме.

## Кураксем



Йӑмрасем ҫинче
Кураксен пасарӗ.
Хумханать ҫӳҫе,
Вӑл та пӑчкӑ сарӗ.

Александр ПЛЕХАНОВ

*Владимир КОНОВАЛОВ*




Финиш
Условные обозначения:
Чёрная звездочка – вернись на старт
Красная стрелка – иди вперёд.
Синяя стрелка – вернись назад.
Воздушный шарик – брось кубик ещё раз.
61
60
59
58
57
56
55
54
53
47
46
45
44
43
42
41
40
19
18
17
16
15
14
13
12
11
10
9
8
7
6
5
4

## Вăйă-кулă уçланки
## Игровая поляна



**Асанне тĕпелĕнче мĕн пытаннă?**

Кто прячется за посудой у бабушки?

**Примерсене шутла та хуравсемпе пĕр килекен тĕссемпе сăрла.**

Реши примеры и раскрась соответствующими цветами.




**Ӳкерчĕкре улма-çырла нумайрах-и е пахча çимĕç-и?**

Узнай, что больше – овощей или фруктов?



*Ксения КОШЕЛЕВА*

Пирĕн пултарулăх
НАШЕ ТВОРЧЕСТВО

# Помощник



*Я расту работником,*
*Для семьи помощником.*
*Поливаю огород –*
*Летом много в нем забот.*

*Нужно прополоть морковку,*
*Подмести в саду дорожку,*
*Накормить цыплят, утят –*
*Они тоже есть хотят.*

*Сбегать в садик за сестренкой,*
*Встретить вечером буренку.*
*Остается время даже*
*Поиграть с веселым другом.*

*Вот какой помощник я!*
*Удивляются друзья.*
*Папа с мамой говорят:*
*«Лучший ты из всех ребят».*

Антон НИКОЛАЕВ.
Моргаушский район,
Чуманкассинская школа.

# Хорошо нам с мамой вместе



*С мамой очень мы дружны,*
*Друг для друга так нужны.*
*Ходим вместе в детский сад,*
*Покупаем самокат.*

*Очень жду я выходной,*
*Чтобы с мамой быть родной.*
*Поиграть с ней, почитать,*
*На диване полежать.*

*С мамой мы печем ватрушки,*
*Убираем все игрушки.*
*А потом идем гулять,*
*Свежим воздухом дышать.*

*Хорошо нам с мамой вместе.*
*Не хотим сидеть на месте.*
*«Лучше мамы моей нет», –*
*Вот какой я дам ответ.*

Лиана ИЛЛАРИОНОВА.
Моргаушский район,
Чуманкассинская школа.

Александр ПЛЕХАНОВ

Сăрласа илемлет



# РАСКРАСКА

Марина ГЕРОНТЬЕВА






**Мулкачăн чăн мĕлкине туп.**

**Найди настоящую тень зайчонка.**



**Сăмах каçмăш хуравĕсене туп та пушă клеткăсене çыр.**

**Разгадай кроссворд.**

**Çамрăк çĕвĕçе икĕ пĕр пек пусма татăкĕ тупма пулăш.**

**Помоги найти девочке два одинаковых лоскута.**

*Ксения КОШЕЛЕВА*

# Хаваслӑ кӑранташ
## ВЕСЁЛЫЙ КАРАНДАШ



*Никита КРАСНОВ.*
*Елчӗк районӗ, Яманчурел.*



*Алина ВАЛЕРИАНОВА.*
*Шупашкар, 3-мӗш шкул.*



*Дима СЕМЕНОВ.*
*Канаш районӗ, Ҫӗнӗ Чӑлкасси.*



*Саша ДАНИЛОВ.*
*Шупашкар, 19-мӗш шкул.*



*Диана ЕНЦОВА.*
*Сӗнтӗрвӑрри районӗ, Карапаш пуҫламӑш шкулӗ.*

# Хаваслă кăранташ

## ВЕСЁЛЫЙ КАРАНДАШ



*Катя Д.*
*Шупашкар, 6-мĕш шкул.*



*Кристина ГРИГОРЬЕВА.*
*Шупашкар районĕ, Кăрмăш ача сачĕ.*



*Никита МАЛЫШЕВ.*
*Шупашкар районĕ, Çĕньял Покровски шкулĕ.*



*Софья ШУЙКОВА.*
*Елчĕк районĕ, Шăмалак.*




*Валерия ШАШКИНА.*
*Патăрьел районĕ, Тури Туçа.*



*Дима КУДРЯВЦЕВ.*
*Шупашкар районĕ, Вăрман Çĕктер шкулĕ.*

*Элиза ВАЛАНС*

# Вут чĕлхи вăрăм

Мĕтрипе Кирук – йĕкĕрешсем. Иккĕшĕ те шкулта лайăх вĕренеççĕ, спортра маттур. Пĕр кунхине ашшĕпе амăшĕ ирех хулана кайма пуçтарăнчĕç.

– Ас тăвăр, йĕркеллĕ пулăр. Шăрпăк ан тытăр. Унпа вылясан вут тухать, килсĕр-çуртсăр тăрса юлăпăр, – тесе темле тĕркеве амăшĕ шифоньер тăррине хучĕ.

Пĕр тăвансем теттепе выляма тытăнчĕç. Вĕсен алхасăвне кура кăмака çинче çывăракан кушак çури вăранчĕ те урайне тăрăст! сикрĕ. Тулли витре еннелле ăнтăлчĕ. Шав! тăкăнса кайрĕ шыв. Йĕп-йĕпе пулчĕ пĕчĕкскер, тăр-тăр чĕтрерĕ. Йĕкĕрешсем ун патне чупса пычĕç, ал шăллипе чĕркесе вырттарчĕç. Çук, чĕтреме лăпланаймарĕ Пĕçук. Мĕтри нумай шухăшласа тăмарĕ, тенкел çине тенкел лартса шифоньер тăрринчен шăрпăк илчĕ те ăна çутса кушак пичĕ патне илсе пычĕ.



– Капла ăшă ăна. Тарласа та кайĕ мунчари пек, – хĕпĕртерĕ чунтан.

Акă тепĕр шăрпăкне çутрĕ кăна, вăл çулăмĕпех айккинелле сирпĕнчĕ. Çура мяуклатса тĕп сакайне сикрĕ.

Унччен те пулмарĕ – чӳрече каррине вут тиврĕ. Шĕвĕрккесем хăранипе сĕтел айне пытанчĕç. Шăп çак вăхăтра пӳрте ашшĕпе амăшĕ кĕме ĕлкĕрчĕç те çулăма парăнтарчĕç. Малтан сĕтел айĕнчен Мĕтрие, унтан Кирука туртса кăларчĕç. Сассисене хăпартса ăс пама тытăнчĕç. «Урăх нихăçан та алла шăрпăк тытмастпăр», – сăмах пачĕç арçын ачасем.

...Пĕрене çинче пирус туртма хатĕрленекен Толик аллинчен Мĕтри шăрпăкне кап! туртса илчĕ.

– Вут-кăвартан ялан сыхланмалла! Пĕр шăрпăк кăна пĕтĕм яла тĕп тума пултарать, – терĕ хыттăн.

...Карта çумĕнче çӳп-çап çунтаракан Маюк аппа патне витре йăтса хашкаса çитрĕ Кирук. Шыва ялкăшса çунакан çулăм çине сапрĕ кăна, лăпланчĕ вут чĕлхи.

– Хăвăр утмăл урлă каçнă, çапах ял çумĕнче вут чĕртмелле маррине пĕлместĕр.

...Паян Мĕтрипе Кирука çамрăк пожарнăйсен дружинине йышăнчĕç. Халĕ вĕсем ял-ял тăрăх çӳресе пушар сиенĕ пирки листовкăсем салатаççĕ. Ачасемпе усăллă тĕл пулу ирттереççĕ. Пĕр тăвансем ӳссен пушар хуралĕнче ĕçлеме ĕмĕтленеççĕ.

*Ксения КОШЕЛЕВА*




# «НАШ ДРУЖНЫЙ КЛАСС» + «НАША ВЕСЁЛАЯ ГРУППА»



Йĕпреç районĕ, Пучинке ача сачĕ.



Тăвай районĕ, Элпуç шкулĕ.



Шупашкар, 12-мĕш шкул.



Елчĕк районĕ, Шăмалак ача сачĕ.



Вăрмар районĕ, Карăкçырма пуçламăш шкулĕ.



Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм шкулĕ.



Шупашкар, 50-мĕш шкул.

# Пирĕн тăрăхри ÿсен-тăран

Александр ПЛЕХАНОВ

**Лиственница.** Пирĕн тăрăхра çак йывăç лаптăкĕ ÿссе пырать. Уйрăмах Çĕпĕр лиственницин лаптăкĕ анлă сарăлнă. Йывăç çÿллĕшĕ 30-45 метр. 500 çул таран пурăнма пултарать. Паха йывăçсен йышне кĕрет.





**Хыр – Сосна.** Çĕр чăмăрĕн çурçĕр пайĕнче 100 тĕслĕ хыр çитĕнет, пирĕн тăрăхра вара – пĕрре. Çÿллĕшĕ 40 метр таран пулать. Çак йывăç строительствăшăн паха материал шутланать. Хыр сухăрĕпе хими промышленноçĕнче анлă усă кураççĕ.

**Ăвăс – Осина.** Хăвăрт çитĕнекен тирек йышне кĕрекен йывăç. Вăтăр метр çÿллĕш ÿсме пултарать. Пирĕн республикăра çак йывăçăн пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 44 пин гектар ытла. Ăвăспа строительствăра тата ал ĕç ăстисем усă кураççĕ.



*Дорогие родители!*

*Подписку на журнал можно оформить с любого месяца, в любом отделении почты, киосках ОАО «Чувашпечать» и редакции.*

*Индексы 73771 (в республике) 11468 (за пределами республики)*

© «ТЕТТЕ - Игрушка»
Кĕçĕн çулхи ачасен журналĕ
Журнал для детей дошкольного и младшего школьного возраста
На чувашском и русском языках
Индексы 73771 (в республике), 11468 (за пределами республики)
1994 çулхи çурла уйăхĕнченпе тухать
Издается с августа 1994 года
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики; АУ Чувашской Республики «Издательский дом «Хыпар» Мининформполитики Чувашии.
4 (236) №, ака (апрель), 2014

Директор-тĕп редактор – А.ЛЕОНТЬЕВ
Шеф-редактор – В.ФЕДОРОВ
Компьютер дизайнĕ – Ф.ЧЕРНОВ
Наш адрес: 428019, г.Чебоксары, проспект Ивана Яковлева, 13, Дом печати. Телефоны: 56-00-67, 28-83-86
Наш сайт: www.hypar.ru. Электронная почта: tantas@list.ru
Журнал «Тетте-Игрушка» зарегистрирован Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00311 от 12.12.13 г.
Территория распространения — Чувашская Республика – Чувашия.
Цена свободная.
Журнал набран и сверстан в техническом центре ИД «Хыпар», отпечатан в типографии ГУП ЧР «ИПК «Чувашия» (428019, г.Чебоксары, проспект Ивана Яковлева, 13).
Подписано к печати 21.04.2014. Дата выхода в свет 28.04.2014.
Формат 60x84, Усл. п.л. 2,33.
Тираж 6343 экз. Заказ № К – 762.